27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
СЕНТЯБРЬ
1
ЭРНЕКУН
172(6667) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне МАЛИНОВСКИЕ

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, наступлени туса пырсе, паян, августăн 30-мĕшĕнче, тăшманпа çапăçса, Румынин нефть промышленноçĕн тĕп центрĕ пулса тăракан ПЛОЕШТИ хулине туртса илнĕ.

Çапла вара, БУЗЭУ хулипе ПЛОЕШТИ хулине илнĕ хыççăн Румынин мĕнпур нефтлĕ районĕсене те нимĕç захватчикĕсенчен тасатнă.

ПЛОЕШТИ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче ТРОФИМЕНКО генерал-лейтенантăн, ПЕТРУШЕВСКИЙ генерал-лейтенантăн, ГОРЯЧЕВ генерал-лейтенантăн, ЗОЛОТУХИН генерал-майорăн, КАРЛОВ полковникăн, КОНЕВ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-майорĕн ЛЕБЕДЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн ГУСЕВĂН, ЧЕРНОВ полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-полковникĕн КУРКИНĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн КРАВЧЕНКĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн САВЕЛЬЕВĂН, ШУТОВ полковникăн, КОВАЛЕВ подполковникăн, ПАВЛОВСКИЙ подполковникăн, ОСАДЧИЙ полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ГОРЮНОВĂН, авиаци генерал-майорĕн ВИТРУКĂН летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн ЦИРЛИНĂН, ФАДЕЕВ полковникăн, ПОНИМАШ полковникăн, ГОЛУКОВИЧ подполковникăн, МЯСНИКОВ полковникăн, КОРЖОВ подполковникăн, КОВАЛЕНКО полковникăн саперĕсем; АГАФОНОВ полковникăн, ШЕРВУД полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве ялан асăмра палăртса хăварас тесе, ПЛОЕШТИ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «ПЛОЕШТИНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, августăн 30-мĕшĕнче, 22 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, иççĕр çирĕм тăвату тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ПЛОЕШТИ хулине ирĕке кăларнăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ПЛОЕШТИ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, пурне те çапăçăва тав тăватăп — питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи августăн 30-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне МАЛИНОВСКИЕ

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, питĕ хăвăрт наступлени туса пырса, нимĕç çарĕсен группировкине ПЛОЕШТИ районĕнче тата ПЛОЕШТИ хулинчен кăнтăртарахра çĕмĕрсе тăкнă те паян, августăн 31-мĕшĕнче, БУХАРЕСТ хулине кĕрсе кайнă, çапла вара Румынин столицине çурçĕртен нимĕçсем хăратса тăрассине пĕтерсе хунă.

БУХАРЕСТ патне пымалли вырăнсенче нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă çапăçусенче МАНАГАРОВ генерал-лейтенантăн, ТЕРЕНТЬЕВ генерал-майорăн, АКИМЕНКО генерал-майорăн, ОСТАШЕНКО генерал-майорăн, КАРПУХИН генерал-майорăн, СИДОРЕНКО полковникăн, ОГОРОДОВ генерал-майорăн, СОБОЛЕВ полковникăн, ТРАВНИКОВ генерал-майорăн, ГИЗАТУЛИН полковникăн, ЗДАНОВИЧ генерал-майорăн, ТКАЧЕВ полковникăн, ЕСИН полковникăн, ВОЛОШИН полковникăн, çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн ФОМИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ГУСЕВĂН, ЗЫКОВ полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-полковникĕн КУРКИНĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн КРАВЧЕНКĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ВОЛКОВĂН, КОЛЕСНИКОВ полковникăн, МИРОНОВ полковникăн, СЕЛЕЗНЕВ полковникăн, ОВЧАРОВ подполковникăн, МИХНО подполковникăн, РЕШЕТНИКОВ полковникăн, ЧУНИХИН полковникăн, ИНДЕЙКИН подполковникăн, ХВАТОВ полковникăн, БЕЛОВ подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ГОРЮНОВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн СТЕПИЧЕВĂН, авиаци генерал-майорĕн ПОДГОРНЫЙĂН, авиаци генерал-майорĕн ВИТРУКĂН летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн ЦИРЛИНĂН, ФАДЕЕВ полковникăн, БОГДАНОВ полковникăн, ИСАЕВ полковникăн, ГОЛУКОВИЧ подполковникăн, МЯСНИКОВ полковникăн, КОРЖОВ подполковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн ЛЕОНОВĂН, ШЕРВУД полковникăн, МАКАРЕНКО полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве ялан асăмра палăртса хăварас тесе, БУХАРЕСТ патне пымалли вырăнсенче нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «БУХАРЕСТСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, августăн 31-мĕшĕнче, 22 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, виççĕр çирĕм тăвату тупăпа çирĕм тăвату хут пĕр харăс персе, УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, БУХАРЕСТ патне пымалли вырăнсенче нимĕçсен группировкине çĕмĕрсе тăкнăскерсене тата Румыни столицине хăрушлăхсăр пурăнма май туса панăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, БУХАРЕСТ патне пымалли вырăнсенче нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи августăн 31-мĕшĕ.

Совет шкулĕн çĕнĕ çитĕнĕвĕсемшĕн

Паян вĕренӳ çулĕ пуçланать. Совет шкулĕн çутă та таса класĕсем нумай пин ачасен савăнăçлă шавĕпе тулаççĕ. Кăçал вĕренӳ çулĕ пур классенче те пĕр вăхăтра пуçланмасть. Паянхи кун партăсем хушшине кĕçĕн классенче вĕренекен ачасем лараççĕ. Аслă классенче вĕренекенсем вĕренӳ çулне октябрĕн 1-мĕшĕнче тытăнаççĕ.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕ иртнĕ çулхинчен чылай уйрăмлăхсемпе палăрса тăрать. Правительство йышăннă тăрăх, 1-мĕш классенче вĕренме çиччĕ çулхи ачасене те илеççĕ. Çапла вара, пирĕн шкулсене вĕренме пыракан ачасен йышĕ иртнĕ çулхинчен нумайрах пулать. Арçын ачасемпе хĕрачасене уйрăмăн вĕрентес ĕçе чылай хуласенчи шкулсене сармалла. ССР Союзĕн Совнаркомĕ «Вĕренӳ пахалăхне лайăхлатмалли мероприятисем çинчен» йышăннă постановлени тăрăх, пуçламĕш тата çиччĕ çул вĕренмелли шкулсенчен вĕренсе тухакансене экзамен тыттармалла, вăтам шкултан вĕренсе тухакансем аттестат илме экзамен памалла. Аттестат илме экзамен ăнăçлă тытакан вĕренекенсене пама ылттăн тата кĕмĕл медальсем тунă.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне республикăри шкулсенчен ытларахĕшĕ пур енĕпе те тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илчĕç. Шкул руководителĕсемпе учительсен пуçарулăхĕ, общественноçа активлăн ĕçе явăçтарни — вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртме май пачĕ. Октябрьски районри Кудемерти, Урхас Кошкăри çиччĕ çул вĕренмелли шкулсенчи учительсемпе вĕренекенсен коллективĕсем классене, вĕренӳ хатĕрĕсене тĕплĕн юсанă, вĕренӳре кирлĕ кĕнекесене тата ытти хатĕрсене çителĕклĕ туяннă, вутă хатĕрленĕ. Кун пек шкулсене кашни районра, хулара йышлăн куратпăр. Нумай шкулсен коллективĕсем, ялти актив тата колхозниксемпе колхозницăсем пулăшнипе, вĕренекенсене вĕри апат çитерессине организацилеççĕ. Чылай çĕрте вĕренекенсене пулăшмалли фондсем тунă, ачасем валли тумтирсем, атă-пушмаксем юсакан мастерскойсем уçнă; çаксем вĕсем анлăн сарма тивĕçлĕ паха пуçару пулса тăраççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче те вĕренӳ çулне çавăн пек ăнăçлă хатĕрленсе тытăнни совет стройĕн иксĕлми хăватне, партипе правительство çамрăк ăрăва лайăх воспитани парассишĕн куллен тимлĕн тăрăшнине кăтартса парать.

Анчах та тунă çитĕнӳсем шкулсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пытарса тăма ирĕк памаççĕ-ха. Учительсен районсенчи канашлăвĕсенче, çутĕç работникĕсен республикăри канашлăвĕнче иртнĕ вĕренӳ çулĕн итогĕсене сӳтсе-явнă чухне чылай çитменлĕхсем пуррине палăртнă. Пуриншĕн те паллă, шкулти тĕп фигура вăл — учитель. Анчах çутĕç органĕсем учительсен кадрĕсене тĕрĕс вырнаçтарас, вĕсен пĕлĕвне ӳстерес, вĕсен ĕç условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе начар ĕçлеç çĕ-ха. Заочно вĕренес йĕркене тивĕçлипе организацилемен. Çар ĕçне вĕрентекенсен пĕлĕвĕ çителĕксĕр, вĕсем пĕрмаях улшăнса тăнине пĕтермен. Шкул тулашĕнчи ĕçе те пур çĕрте те кирлĕ пек йĕркелемен.

Шкулсен ĕçĕнчи тепĕр çитменлĕх вăл— предметсене пурнăçран уйрăмăн илсе вĕрентес йăлана пĕтерменни пулать. Çапла, сăмахран, грамматикăна калаçакан чĕлхепе çыхăнтармаççĕ. Вĕренекенсем грамматика правилисене пăхмасăр калама вĕренеççĕ те кирлĕ чухне вăл правилăсемпе усă курма пĕлмеççĕ. Çавăн пек фактсем ытти предметсене вĕрентнĕ çĕрте те палăраççĕ.

Паян, çĕнĕ вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш кунĕнче, совет учителĕсем хăйсен малтанхи урокĕсенче ачасене совет халăхĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен, ачасен вăрçă вăхăтĕнчи тивĕçĕ çинчен калаççĕ. Ку паллă, халĕ, пирĕн тăван çĕршыв хăйĕн пĕтĕм вăйĕсене пухса нимĕç тискер кайăкне пĕтерсе тăкас тесе кĕрешнĕ вăхăтра, совет шкулĕн хăйĕн пĕтĕм пултарулăхне çамрăк ăрăва тăван çĕршывшăн çапăçма ялан хатĕр тăракан çынсем туса пăхса ӳстерне çĕре памалла.

Çамрăк ăрăва çирĕп пĕлӳ тата тĕрĕс воспитани парас тĕлĕшпе совет шкулĕ умĕнче тăракан задачăсене пурнăçа кĕртесси, тĕпрен илсен, шкул работникĕсемпе çутĕç работникĕсем партипе правительство кăтартса панă мероприятисене пăхăнса, тимлĕн ĕçленинчен килет. «Вĕренекенсем хăйсене тыткаламалли правилăсем», вĕренекенсен билечĕсем, вĕренекенсем хăйсене шкул тулашĕнче тыткаламалли йĕркесем, учительсемпе вĕренекенсем хушшинче вĕренӳ ыйтăвĕпе пыракан ăмăртăва пăрахăça кăларни, пĕлӳ пахалăхне цифрăсемпе хакламалла туни, — çаксем ĕнтĕ шкул работникĕсемпе çутĕç органĕсен кулленхи ĕçĕнче тĕп вырăнта пулмалла. Асăннă мероприятисем вĕренӳ пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе çав тери пысăк вырăн йышăнса тăнине иртнĕ вĕренӳ çулĕн итогĕсем уçăмлăн çирĕплетсе параççĕ.

Çутĕç органĕсен, шкул директорĕсен, инспекторсен вĕренӳ ĕçне мĕнле организациленине тăтăшах тĕрĕслесе тăрассине вăйлатмалла. Çав вăхăтрах вĕсем учительсене кулленхи ĕçре тимлĕн пулăшса тăма тивĕçлĕ. Учительсен пурнăç ыйтăвĕсене тивĕçтерессине çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

Учительсемпе шкул директорĕсен тата çутĕç органĕсен шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕренĕве явăçтарас, вĕсене валли вĕренме условисем туса парас енĕпе вăйлăн ĕçлемелле. Халех вĕренекенсен, уйрăмăнах фронтовиксен ачисен, пурнăç условийĕсемпе интересленмелле. Пур шкулсенче те вĕри апат пултăр, шкул ачисем тумтирсем çитменнине ан туйччăр. Шкулсем валли вутă çителĕклĕ пултăр, шкул çуртчĕ юсавлă пултăр. Çак ĕçсене пĕтĕмпех çак кунсенчех туса çитермелле.

Çутĕç органĕсене партипе совет тата профсоюз организацийĕсем вăйлăн пулăшма тивĕçлĕ. Рабочисемпе служащисене, колхозниксемпе колхозницăсене шкула пулăшас ĕçе анлăн явăçтармалла. Комсомол организацийĕсем умĕнче пысăк ĕçсем тăраççĕ. ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XII-мĕш пленумĕ комсомолецсем валли ĕç программи пачĕ. Вырăнти организацисен пленум кăтартса панисене куллен çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пымалла.

Вĕренӳ çулĕ совет шкулĕн пурнăçĕнчи хĕрӳллĕ те ответлă тапхăр пулса тăрать. Иккĕленмелли çук, шкул работникĕсемпе çутĕç органĕсем, партипе совет тата комсомолпа профсоюз организацийĕсем большевикла хастарлăхпа ĕçлесен, совет шкулĕ кăçалхи вĕренӳ çулĕнче çамрăк ăрăва воспитани парас тĕлĕшпе çĕнĕ ӳсĕмсем тăвĕ.

Ачасене таса та çутă классем кĕтеççĕ

КУСЛАВККА, августăн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри чылай шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне пур енĕпе те тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илчĕç. Варасăрти çиччĕ çул вĕренмелли шкулти учительсемпе вĕренекенсем вĕренме кирлĕ майсене пĕтĕмпех туса ĕлкĕртнĕ. Шкул çурчĕсене юсанă, партăсемпе доскасене сăрланă, учебниксем хатĕрленĕ. Шкулта вĕри апат организацилеме çĕрулми тата ытти пахча-çимĕçсем лартса ӳстернĕ. Вĕсене пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе вĕренекенсем звеносем организацилесе ĕçленĕ.

Шкула вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе колхозниксемпе колхозницăсем нумай пулăшрĕç. Вĕсем çителĕклĕ таранах вутă хатĕрлесе, турттарса пачĕç.

Ыран, вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш кунĕнче, кĕçĕн классенче вĕренекенсене çутă та таса классем йышăнса илеççĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне лайăх хатĕрленсе кĕтĕмĕр

Елчĕк районĕнчи Тăрмăшри 7 çул вĕренмелли шкулта кăçал 250 ача вĕренмелле. Вĕсем аван вĕренччĕр тесен, чăн малтанах шкул çуртне лайăх хатĕрлени, вутă çителĕклĕ пулни кирлĕ.

Шкул çуртне эпир тĕплĕн юсарăмăр, 7 кăмака юсанă, иккĕшне çĕнĕрен тунă. Колхозниксемпе колхозницăсем пулăшнипе шкул валли 280 кубометр вутă хатĕрленĕ. Ăна халĕ «Новый путь» тата «Красное знамя» колхозсем турттараççĕ.

Шкул участокĕнче 3,5 гектар çине тырă тата пахча-çимĕçсем акса хăварнă. Тырпула вăхăтра пухса кĕртрĕмĕр. Шкулта столовăй уçма апат-çимĕçсем çителĕклĕ таранах пур. Вĕсене усрама пĕр амбар юсаса патăмăр. Халĕ пахча-çимĕçсем хума овощехранилище туса пĕтеретпĕр.

П. ЩЕРБАКОВ,
Тăрмăш ялсовет председателĕ.

КОЛХОЗНИКСЕМПЕ УЧИТЕЛЬСЕН ВĂЙĔПЕ

ЧУРАЧĂК. Шуркасинчи вăтам шкул (директорĕ Леонтьев юлташ) çĕнĕ вĕренӳ çулне август уйăхĕ тĕлнех тĕплĕн хатĕрленсе çитнĕ. Шкул çийне юсанă, 8 кăмака тӳрлетнĕ, классене тасатса йĕркене кĕртнĕ, партăсене юсаса сăрланă. Шкул валли 200 кубометр ытла вутă хатĕрленĕ. Ку вăл хĕл каçма çитет. Çак ĕçсене пĕтĕмпех колхозниксемпе учительсен вăйĕпе тунă.

Колхозниксем пулăшнипе тата вĕренекенсем активлăн ĕçленнипе шкулта вĕри апат организацилеме пахча-çимĕçсем лартса тунă. Вĕсене пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕртнĕ.

Вĕренекенсене библиотека валли кĕнекесем пухас, наглядлăй пособисем тӳрлетес ĕçе явăçтарнă. Пурĕ 500 кĕнеке пухнă, вĕренмелли пособисем те чылай хатĕрленĕ. Анчах та районри çутĕç пайĕ кирлĕ пек пулăшман пирки хăшпĕр учебниксене хатĕрлесе çитереймен-ха. Чăвашла учебниксем çитмеççĕ.

Шкул коллективĕ çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче вĕренӳ пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе вăя шеллемесĕр ĕçлеме сăмах пачĕ.

ПРОХОРОВА.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 30-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 30-мĕшĕнче пирĕн çарсем ТАРТУ хулинчен çурçĕртерехре тăшман пехотипе танкĕсен атакисене сире-сире янă.

ЛОМЖА хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан темиçе пункта туртса илнĕ, вăл шутра — ХОМЕНТОВО, РАДГОШ, ЖОХИ-МИЛЕН, ДОМБЕК, ГРОНДЫ, ОСУХОВО-НОВЕ, ПОРЕМБА ятлă ялсем.

ПРАГАРАН çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене ăнăçлăн сирсе янă.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă, августăн 30-мĕшĕнче, тăшманпа çапăçса, Румынин нефть промышленноçĕн тĕп центрĕ пулса тăракан ПЛОЕШТИ хулине туртса илнĕ.

БУХАРЕСТ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре фронт çарĕсем, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, халăх пурăнакан 200 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — МИЗИЛ, УРЗИЧЕНИ, СЛОБОЗИЯ, ГЭНДЭРЕЙ хулисем, МИРОШИ, МОВИЛИЦА, МЭРИУЦА, (БУХАРЕСТРАН 27 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре), БРАТИЯ, ПОГОАНЕЛЕ, КИКИНЕЦУ, ЯЗУ, МИХАЙ БРАВУ ятлă пысăк ялсем тата УРЛЯСКА, ЯНКА, ДЕДУЛЕШТИ, ФА-УРЕЙ, РОЕСТИ, ЧИЛИБИЯ, ТАБЛАШТИ, МОНТЕОРУ, УМЕНИ, ВИНТИЛЯНКА, МИЗИЛ, ИНОТЕШТИ, ЧИРЕШУ, ДУДЕШТИ, ЧОАРА, МУРДЖЯНКА, ГЭНДЭРЕЙ, ОГРАДА, СЛОБОЗИЯ, УРЗИЧЕНИ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Августăн 29-мĕшĕнче УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем нимĕçсен çавăрса илнĕ ушкăнĕнчен 15 пин салтакпа офицера тыткăна илнĕ. Тыткăна илнисем хушшинче нимĕçсен 7-мĕш армейски корпусĕн командирĕ—артиллери генералĕ ХЭЛЛЬ, нимĕçсен 79-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ ВАЙНКНЕХТ, генерал-лейтенант, нимĕçсен 258-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ ФИШЕР полковник, нимĕçсен 106-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ РИНТЕНЬЕРГ полковник.

ИЗМАИЛ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем ХЫРШОВА, ЧЕРНАВОДА хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ГЫРЛИЧУ, ТОПАЛУ, КАРАМУРАТ ятлă пысăк ялсем тата КОДРУ, МОКАНИ, ХАМАНДЖЕА, ДЖЕНЕРАЛ-БРОШТЕАНУ, КАРАНАСУФ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Августăн 29-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 48 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 16 самолетне персе ӳкернĕ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕнче

Сĕнтĕр районĕнчи „Çĕнĕ Юнга“ колхозăн ăратлă сысна ферми ĕçĕ çинчен

Çак кунсенче ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Сĕнтĕр районĕнчи «Çĕнĕ Юнга» колхозăн ăратлă сысна ферми ĕçĕсене пăхса тухса решени йышăннă. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çакна палăртнă: «Çĕнĕ Юнга» колхозри сысна ферми, халиччен республикăри ăратлă фермăсенчен чи лайăххи пулнăскер, райçĕрĕç пайĕн тата Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн зоотехникĕсем çителĕксĕр ертсе пынине пула тата ВКП(б) Сĕнтĕр райкомĕпе райсовет исполкомĕ унăн ĕçĕ çине сӳрĕк пăхнине пула, 1944 çулта хăйĕн ĕçне питех те япăхтарса янă. Кăçалхи августăн 1-мĕшĕ тĕлне колхозра сыснасем ĕрчетмелли плана пĕтĕмпе те 87,0 процент кăна тултарнă. Фермăра, план тăрăх, 100 сысна пулмалла пулсан, унта 85 сысна кăна усранать, сысна амисем 22 пуç пулмалла пулсан, 21 пуç кăна шутланаççĕ. Кăçалхи çиччĕ уйăх хушшинче сыснасен йышĕ, кăçал çурланă сысна çурисемпе пĕрле шутласан, 114 чакнă. Кăçал çуралнă 108 сысна çуринчен 15 пуç вилнĕ, çакă вăл 13,8 процент пулать.

Ăратлă сыснасем ĕрчетес ĕçе фермăра япăхтарса янă. 1944 çулхи май уйăхĕччен çамрăк сыснасене пăхса ӳстерни тата ăратлă сысна çурисем паракан амăсене пăхса усрани çинчен журнал çырса пыман. Сысна амисене хăçан чуптарни тата вĕсем хăçан çăвăрлани çинчен çырса пымаççĕ. Чуптару вăхăтĕнче сысна амисем çумне аçисене çирĕплетес ĕçе йĕркелемен. Сысна амисемпе аçисем мĕнле ăратлă пулни çинчен фермăра ĕçлекенсем калани тăрăх кăна пĕлме пулать. Ăратлă сыснасем ĕрчетес ĕçе çавăн пек япăхтарса янине пула, «Çĕнĕ Юнга» колхозăн ферминче пĕр тăван сыснасем хутшăнса кайни те пулнă, çавна пула сысна амисем сахал çăвăрлакан пулнă тата хăшпĕр чухне вилĕ çурăсем те çăварланă. Сысна ĕрчетес ĕç çавăн пек япăхса кайнин сăлтавĕ колхоз правленийĕ пĕтĕ сысна амисемпе аçисене начар тăрантарнинчен те килнĕ. Сыснасене фермăра минераллă апат-çимĕçсем памаççĕ. Кăçалхи çиччĕ уйăх хушшинче фермăри 21 сысна аминчен пĕтĕмпе те 108 çурă кăна илнĕ, çакă вăл кашни сысна ами пуçне 5,1 сысна çури кăна тивет. Сысна хупса усрамалли витене кирлĕ пек йĕркелемен, урайĕсене тӳрлетмен, витере йĕпе тăрать. Сыснасене ерекен чир-чĕрсенчен сыхлас шутпа вăхăтра прививкăсем туман. Сысна çурисене тĕрлĕрен ĕне сĕчĕпе тăрантарса усраççĕ. Зоотехникăпа ветеринари правилисене çаĸăн пек киревсĕр пăснине пула, 1944 çулта мĕнпур сыснасем рожа чирĕпе чирленĕ.

Çав чире пула çамрăк сыснасенчен 14 пуç ирĕксĕрех пуснă, 15 сысна çури шутă вилнĕ, 17 сысна çури ытти чирсемпе чирлесе пĕтнĕ.

Партин колхозри пуçламĕш организацийĕпе ВКП(б) райкомĕ фермăра ĕçлекенсем хушшинче массăллă-политикăллă тата агитациллĕ ĕçе пачах та туса пымаççĕ. Районри çĕрĕç пайĕ тата ялхуçалăх специалисчĕсем сысна ферминчи работниксене зоотехникăна вĕрентес ĕçе организацилемен.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăннă:

1. ВКП(б) Сĕнтĕр райкомне тата Çĕрĕç Халăх Комиссариатне (Купцов юлташа) «Çĕнĕ Юнга» колхозăн ăратлă сысна фермин çӳлте кăтартса панă çитменлĕхĕсене пĕтерес тĕлĕшпе халех тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушас.

2. Пĕр тăван сыснасем хутшăнса кайнине пĕтерес шутпа, «Çĕнĕ Юнга» колхозăн сысна ферминчи сысна аçисене урăх сысна аçисемпе улăштармалла, çавна май колхоза ытти колхозсенчен ăратлă сысна аçисем икĕ пуç илсе памалла.

3. Сĕнтĕр çĕрĕç пайĕн тата «Çĕнĕ Юнга» колхоз правленийĕн фермăра ăратлă сыснасене çырса пырассине (сысна çурисем ӳссе пыни çинчен çырмалли журнала, сысна амисене çырса пымалли кĕнекене тата сыснасене чуптарнипе вĕсем çăвăрлани çинчен çырмалли кĕнекене) халех йĕркелемелле, малашне вара фермăра пĕр тăван сыснасем хутшăнасси пачах та пулмалла мар. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн колхоз фермине ăратлă сыснасене шута илмелли бланксемпе кĕнекесене кирлĕ таран тупса памалла.

4. «Çĕнĕ Юнга» колхозăн правленине кăçалхи сентябрĕн 1-мĕшĕччен сысна витине юсаса йĕркене кĕртме, унта санитари тĕлĕшпе йĕрке тума тата мĕнпур сыснасем валли хĕл каçмалăх апат-çимĕç тупса хума хушас.

5. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместительне Купцов юлташа 1944 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕччен республикăри колхозсенче майракаллă шултăра выльăхсен, сыснасен тата сурăхсен ăратлă фермисем мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе тухма тата вĕсенче ăратлă выльăхсем ĕрчетес ĕçе тивĕçлипе организацилеме хушас. Республикăра ăратлă выльăхсене шута илессине тата Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе районри çĕрĕç пайĕсенче ăратлă выльăхсене кĕнекесем çине çырса пырассине йĕркене кĕртмелле. Колхозсенчи ăратлă выльăхсем ĕрчетекен мĕнпур фермăсене ăратлă выльăхсене шута илме кирлĕ бланксемпе кĕнекесем çителĕклĕ таран тупса памалла.

6. Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене районсенчи зооветработниксен вăйĕпе колхозсенчи ăратлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен фермăсен ĕçне сăнаса тата ертсе пырас ĕçе кирлĕ пек туса пыма хушас; çав фермăсенчен чăннипех те выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли кăтартуллă хуçалăхсем туса хумалла. Зоотехниксемпе ветеринари работникĕсен пĕр тăван сыснасем хутшăнассине пĕтерес ĕç çине, уйрăмах сыснасем ĕрчетес тĕлĕшпе, тимлĕн çавăрăнса пăхмалла, пĕр тăван выльăхсем хутшăнса кайни выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе, уйрăмах выльăхсен пахалăхне лайăхлатас ĕçе, пысăк сиен кӳнине асра тытса тăмалла.

7. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, ВКП(б) райкомĕсене выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсене зоотехника тĕлĕшпе пулăшассине вăйлатас ĕç çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхма хушас; выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсене зоотехникăпа ветеринари ĕçне тăтăшах вĕрентсе пымалла, вĕсем хушшинче массăллă-политикăллă тата агитациллĕ ĕçе лайăх йĕркелемелле.

Француз халăхĕн ирĕклĕх комитечĕн председательне де Голль генерала

Париж

Франци столицине Париж хулине ирĕке кăларнă май, генерал господин, эпĕ француз халăхне Совет Союзĕнчи халăхсен ячĕне тата хамран та туслă салам калатăп тата Франци Германи пусмăрĕнчен хăвăртрах ирĕке каларма ырă сунатăп.

И. СТАЛИН.

Фашистла нимĕç захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем тунă тискер ĕçсене тĕпчесе палăртакан Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси ПĔЛТЕРНИ

Тĕпчесе пĕлнин материалĕсем тăрăх, курнă çынсем каланă тăрăх тата фотографи документсем тăрăх Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси çакна палăртнă: гитлерла вăрă-хурахсем, Германин çар командованийĕ кăтартнипе, вырăс халăхĕн культурăпа истори памятникĕсене, вырăссен аслă поэчĕн Александр Сергеевич Пушкинăн пурнăçĕпе тата ĕçĕсемпе çыхăнса тăракан памятниксене йăлтах пĕтерсе тăкнă.

Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси аяларах фашистла нимĕç ирсĕрĕсем СССР Наука академийĕн Пушкин заповедникĕнче ишĕлтерни тата тискер ĕçсем тунă çинчен çырнă акта пичетлет.

АКТ

Вырăс халăхĕн культурăпа истори памятникĕсене, вырăссен гениллĕ поэчĕн Александр Сергеевич Пушкинăн пурнăçĕпе тата ĕçĕсемпе çыхăнса тăракан памятниксене сыхласа хăварма тăрăшса, Совет правительстви 1922 çулхи мартăн 17-мĕшĕнче поэтăн Михайловскинчи çурчĕпе паçмине, унăн Святогорски монастырьти вилĕ тăприне тата çав монастырьпе юнашар вырăнсене — Тригорское, Городище тата Воронич ялĕсене государство заповедникĕ тесе пĕлтернĕ.

Пушкин заповедникĕ, уйрăмах та унăн Михайловскинчи çурчĕпе пасми, вырăс халăхĕшĕн питĕ хаклă; унта Пушкин «Евгений Онегинăн» 3-мĕш сыпăкне çырса пĕтернĕ тата 4-мĕш, 5-мĕш, 6-мĕш сыпăкĕсене çырнă, «Цыганы» ятлă поэмине çырса пĕтернĕ, «Борис Годунов» ятлă трагедине çырнă, поэмăсемпе лирикăллă сăвăсем нумай çырнă.

1941 çулхи июль уйăхĕнче Пушкин заповедникне гитлеровецсем вăркăнса кĕнĕ. Вĕсем унта виçĕ çул хушши хуçаланса пурăннă, Пушкин памятникĕсене çĕмĕрсе, пĕтерсе пынă.

Çав тискер ĕçсене тĕпчесе пĕлме комисси тунă. Комиссин председателĕ — Совет Писателĕсен Союзĕн Председателĕ Н. С. Тихонов, членĕсем — СССР Верховный Совечĕн депутачĕ И. П. Бойцов, писательсем Л. М. Леонов тата К. А. Федин, СССР Наука академийĕн член-корреспонденчĕ П. И. Лебедев-Полянский профессор, филологи наукисен докторĕ Д. Д. Благой профессор, филологи наукисен докторĕ Н. К. Гудзий профессор, старши научнăй сотрудник Б. В. Шапошников тата Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси представителĕ П. О. Савчук. Çак комисси 1944 çулхи июлĕн 26-мĕшĕпе августăн 1-мĕшĕ хушшинче, фашистла нимĕç захватчикĕсем Пушкин заповедникĕнче тунă тискер ĕçсене пур енчен те тĕпчесе пĕлсе, çакна палăртнă: фашистла нимĕç захватчикĕсем СССР Наука академийĕн Пушкин заповедникне юри ишнĕ, юри тустарнă.

ПОЭТĂН МИХАЙЛОВСКИНЧИ КИЛÇУРТНЕ ИШЕЛТЕРНИ

Отечественнăй вăрçă пуçлансан, Пушкин музейĕнчи хаклă япаласен пĕр пайне Михайловское ялĕнчен тыла куçарса кайнă чухне, Новоржев районĕнчи Жарки ялĕнче вĕсене нимĕçсем тытса илнĕ. Музейри хаклă япаласен тепĕр пайне, ещĕксене хурса, çĕре чавса лартнă пулнă. Малтан нимĕçсем, «культурăна сыхлакансем» пек пулса, çав музее пур çынсемшĕн те уçнă. Каярахпа паллă пулнă тăрăх, нимĕçсем çав музее хăйсенчен пытарнă хаклă япаласене пухса илсе Германие турттарса каясшăн пулса çеç уçнă иккен.

Музейри хаклă япаласене пухса çитернĕ хыççăн нимĕçсем музейре ĕçлекенсене ĕçрен кăларнă, хăшне-пĕрне тытса хупнă. Çапла, 1942 çулта Пушкин заповедникĕн директор заместительне Н. И. Аксенова тытса хупнă. Музей библиотекинче ĕçленĕ Екатерина Ивановăна 1942 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнче 700 çынпа пĕрле нимĕçсен чуралăхне хăваласа кайнă. Вăл Крейс-Торгау ятлă пункта лекнĕ. Унта ăна Совет Союзне тарса кайма хăтланнăшăн тĕрмене хупнă. Нимĕçсем музей заведующине литературăна пĕлмен çынна — вăрман ăстаçине К. В. Афанасьева лартнă. Музей экскурсовочĕ пулма оккупантсем Шиллер ятлă нимĕç хĕрарăмне янă.

Музейри хаклă япаласене 1941 çулхи август уйăхĕнчех çаратма пуçланă.

Нимĕçсен çар комендатурин представителĕ Фоссфинкель обер-фельдфебель çав музее темиçе хут та пынă, унтан вăл хăйне мĕн кăмăла кайнине пурне те—картинăсене, сĕтел-пукансене, кĕнекесене илсе кайнă.

1943 çулхи кĕркунне Пушкин комендатурин коменданчĕ Трайбхольц К. В. Афанасьева музейри хаклă япаласене пурне те ытти çĕре илсе каймашкăн хатĕрлесе хума хушнă. Трайбхольц çапла каланă: фронт çывăхарса килнĕ пирки, çак хаклă япаласене сыхласа хăвармашкăн, вĕсене урăх çĕре куçаратпăр, тенĕ. Музейри хаклă япаласене вара пурне те ещĕксене вырнаçтарса хунă. Унтан вĕсене нимĕç влаçĕсем автомобильсем çине тиенĕ те Германие илсе кайнă.

Нимĕçсем çав музейрен хаклă япаласене илсе кайнине Ф. В. Васильев, Ф. К. Дьяконов, М. А. Иванова, Т. Н. Белькова тата çав заповедник территорийĕнче пурăннă хĕрарăм Екатерина Григорьевна Шендель курнă. Шендель Комиссие çапла каласа панă:

«1943 çулхи кĕркунне эпĕ музей патĕнче вунă автомашина тăнине куртăм. Çав машинăсем çине тыткăна лекнĕ вырăс çыннисем ещĕксем тиетчĕç, вĕсем тиенине нимĕç салтакĕсем асăрхаса тăратчĕç. Машинăсен шоферĕсем те нимĕçсемччĕ. Эпĕ çав ещĕксенче музейри япаласем выртнине пĕлмен, вĕсене унччен пĕр уйăх хушши ещĕксене майлаштарса хучĕç, çак ĕçе Зингер нимĕçпе Шиллер ятлă нимĕç хĕрарăмĕ сăнаса тăчĕç. Шиллера ăна çав музее нимĕçсем янă. Вăл çапла калатчĕ: эпĕ нимĕç поэчĕн Шиллерăн тăванĕ пулатăп, тетчĕ».

Гитлеровецсем Пушкинские Горы ялĕнче Пушкин заповедникĕнчи хаклă япаласене çаратнипе çырлахман. Вĕсем тата вырăнти халăха та çаратнă, вырăс çыннисенчен мăшкăлласа кулнă, вĕсене вĕлернĕ. Нимĕçсен çар коменданчĕ Зангер майор Пушкинские Горы ялĕнче совет çыннисене хăй çакса е персе вĕлернĕ. Нимĕçсен çар комендатури Выборгски, Пушкински тата Новоржевски районсенче пурăннă цыгансене, хĕрарăмсемпе ачасене те, çав тери намăссăррăн та тискеррĕн персе вĕлернĕ. Вĕсене цыгансем пулнă пирки çеç персе вĕлернĕ.

1943 çулхи хĕлле Пушкинские Горы ялне нимĕçсем Иосиф Амель инженера янă. Çак инженер Пушкински тата Новоржевски районсенчи вăрмансене пĕтерме тытăннă. 1943 çулта çуркунне вăл Пушкин заповедникĕнчи авалхи хыр вăрманне касма пуçланă.

Вырăнти халăх, Пушкин заповедникне çапла тустарнине, мăшкăлланине тарăхса, касса хатĕрленĕ йывăççене пурне те çунтарса янă. Çакăн хыççăн вăрман касса хатĕрлес ĕçе ертсе пынă инженер Иосиф Амель çапла каланă: эпĕ пĕтĕм заповедника касса пĕтеретĕп, тенĕ. Пушкин заповедникĕнче вара 30.000 кубометра яхăн йывăç каснă.

1944 çулхи февраль уйăхĕн вĕçĕнче нимĕçсем Михайловское ялне çар объекчĕ туса хунă, ăна вĕсем нимĕç оборонин тĕреклетнĕ пункчĕ туса хунă. Парк территорийĕнче траншейăсем, çÿремелли хушăксем, бомбăсемпе пульăсенчен пытанмалли вырăнсем туса тултарнă.

«Няня пÿртне» нимĕçсем сÿтнĕ. Унпа юнашар тата пÿрт вырăнĕн пĕр пайĕнче те пилĕк сийлĕ пысăк блиндаж туса хунă. Тепĕр çавăн пек блиндажа нимĕçсем музей çурчĕ патĕнче тунă.

Михайловскинчен тухса каяс умĕн нимĕçсем Пушкин килçуртне пĕтĕмпех тустарса, мăшкăлласа пĕтернĕ. Пушкин пурăннă çуртăн никĕсĕ çинче тунă çуртамузее нимĕçсем çунтарса янă, çав çуртран халь ишĕлчĕк купи çеç тăрса юлнă. Пушкин памятникĕ валли мрамортан тунă плитана çĕмĕрнĕ те çав купа патне пăрахнă. Пушкин заповедникĕн Михайловскине кĕнĕ вырăнта ларнă икĕ çуртĕнчен пĕрне нимĕçсем çунтарса янă, тепĕрне хытă сиенленĕ. Нимĕç ирсĕрĕсем Пушкинăн Михайловски парка кĕнĕ çĕрте çакăнса тăнă пысăк портретне виçĕ тĕлтен персе шăтарнă, хапхине хăйне ишсе хăварнă.

Михайловскинчен тухса кайсан, гитлеровецсем ăна миномётсемпе тата артиллеририн пенĕ. Сорочь шывĕ патне анмалли пусмана нимĕçсем минăсемпе ишĕлтернĕ; çурт патне пыракан аллея çинчи авалхи çăкасене хуçса пĕтернĕ; çурт умĕнче ларакан хурамана снарядсем сиенленĕ. Пушкин аллейи хĕррипче ларнă чи пысăк чăрăшсене йăвантарнă.

ТРИГОРСКОЕ, ГОРОДИЩЕ ТАТА ВОРОНИЧ ЯЛЕСЕНЧЕ ИШЕЛТЕРНИ

Поэтăн темиçе çул хушшинчи пурнăçĕпе ĕçĕсем Тригорское ялĕпе — Пушкин тусĕсен Осипов-Вульфсен килçурчĕпе çыхăнса тăраççĕ.

Фашистла нимĕç захватчикĕсем Тригорскинчи парка тустарса, вараласа пĕтернĕ, унта пралук картисем туса тултарнă тата минăсем лартса тухнă.

«Пушкин юманĕ» ятлă питĕ пысăк юман айĕнче нимĕçсем блиндаж тунă. Çав юмана Пушкин питĕ юратнă, теççĕ. Паркри чи илемлĕ вырăна — Сорочь шывĕн çыранне — нимĕçсем чаваласа пĕтернĕ. Унта «Онегин скамьи» ятлă скамье ларнă. Паркри нумай йывăçа касса пĕтернĕ, паркăн пысăк пайне минăсем хурса хăварнă.

Паркпа юнашар ларакан Воронич ялне нумай ишнĕ. Вăл ял «Борис Годунова» çырнипе çыхăнса тăрать. Унта Туристсен çуртне тата ытти темиçе çурта çунтарса янă; шкула ишсе хăварнă. Пушкин вăхăтĕнченех юлнă йывăç чиркĕве çунтарса янă, çав чиркÿре Пушкин 1825 çулхи апрелĕн 7-мĕшĕнче акăлчансен аслă поэтне Байрона асăнса панихида туса ирттернĕ. Çав чиркÿ патĕнчи масар çине (унта Пушкин хурăнташĕсенчен пĕрне—В. П. Ганнибала тата поэтăн çывăх çыннине — И. Е. Раевский священнике пытарнă) минăсем лартса тухнă, траншейăсем чавса тултарнă, масара тустарса пĕтернĕ.

Нимĕçсем Осипов-Вульфсен çемьин вилĕ тăприсене те мăшкăлласа пĕтернĕ.

Тригорское ялĕ хуçин П. А. Осиповăн вилĕ тăпри çинчи мрамор плитине çĕмĕрнĕ; унăн ывăлĕн, Пушкин тусĕн—А. С. Вульфăн вилĕ тăпри çинчи мрамортан тунă хĕресе сиенленĕ.

Пушкин заповедникĕн историллĕ сăнарне нимĕçсем паллайми тăваччен пăсса пĕтернĕ.

ПУШКИНĂН ВИЛĔ ТĂПРИНЕ МĂШКĂЛЛАСА ПĔТЕРНИ ТАТА СВЯТОГОРСКИ МОНАСТЫРЕ ИШЕЛТЕРНИ

Нимĕçсем вырăс халăхĕн çав тери хисеплесе пурăнакан памятникĕсене калама çук намăссăррăн та тискеррĕн ишĕлтерни —вĕсем Пушкинăн вилĕ тăприне мăшкăлласа пĕтернинчен ытла та лайăх курăнать. Пушкин заповедникне çĕмĕрес мар тесе, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем çав районран çапăçмасăрах тухса кайнă, вĕсем Ново-Ржев патнелле чакнă. Апла пулин те нимĕçсем 1941 çулхи июлĕн 2-мĕшĕнче Святогорски монастырь çине бомбăсем пăрахнă. Пушкинăн вилĕ тăпри шăп çав монастырĕн стени патĕнче выртать.

1943 çулхи март уйăхĕнче, фронт Пушкинские Горы ялĕ патне çывăхариччен нумай малтанах, нимĕçсем хăйсем «сыхласа тăнă» Святогорски монастыре пайăнпайăн ишме пуçланă. И. Д. Дмитриев священник каланă тăрăх, нимĕçсем çав монастырьти тĕп чиркĕве—Успенски собора, XVI-мĕш ĕмĕрте Иоанн Грозный хушнипе тунăскере — икĕ хутчен сирпĕнтернĕ. Иккĕмĕш хутĕнче çав собор вара йăлтах ишĕлнĕ: унăн колокольни ишĕлсе аннă, 200 çул каялла тунă пысăк чанĕ вэнса кайнă, çав чанăн ванчăкĕсем халь кирпĕчсемпе пĕрле сапаланса выртаççĕ; собор тăрринчи хĕресе ÿкернĕ; собор маччин хĕвеланăç енчи пайне снаряд лексе шăтарнă, собор çумне туса лартнă çуртăн çивиттийĕ ишĕлсе аннă. Монастырьти Никольски чиркĕве, апатланмалли çурта, монахсем пурăннă пÿлĕмсене, монастырьти гостиницăна тата ытти çуртсене те çунтарса янă. Монастырĕн хапхине артиллери снарячĕ тивсе сиенленĕ, хĕвеланăç енчи хапха çинчи иккуна çĕре ÿкернĕ.

Каялла чакнă чухне нимĕçсем Пушкинские Горы район центрĕнчи пур çуртсене те тенĕ пекех çунтарса янă, Успенски собора йăлтах тискеррĕн те ăссăррăн çĕмĕрсе пĕтернĕ. Çав собор тавра кирпĕчсем, тимĕр, хуçăлса пĕтнĕ хăмасем сапаланса выртаççĕ. Иконостаса питĕ хытă сиенленĕ; унăн иккунĕсене урайне сапаласа пăрахнă; хăшне-пĕрне персе шăтарнă. Çапла, акă, соборăн тулашри алăкĕ çинчи Петр апостолăн пысăк иккунне, пăшалпа е револьверпа çывăхранах персе, темиçе тĕлтен шăтарнă. Пур çĕрте те чиркÿри япаласен ванчăкĕсем сапаланса выртаççĕ; урайĕнче чиркÿ кĕнекисенчен тата Святогорски монастырĕн историне кăтартса паракан документсенчен чĕрсе илнĕ листасем тĕмĕн чухлех выртаççĕ.

Поэтăн вилĕ тăприне питĕ вараласа пĕтернĕ. Çав вилĕ тăпри патне пымалли икĕ пусмана та çĕмĕрнĕ; Пушкинăн вилĕ тăпри таврашĕнче çуп-çапсем, иккун хăмисен ванчăкĕсем, тимĕр листасен татăкĕсем темĕн чухлĕ выртаççĕ. Поэтăн аслашшĕпе асламăшĕн (Осип Абрамовичпа Мария Алексеевна Ганнибалăн) вилĕ тăприсем çинчи плитасене çÿп-çапсен айне тунă. Çырса çапнă хăма татăкĕсене хуçнă та çав ванчăксен купи çине пăрахнă. Памятник тавра тытса тухнă тимĕр решеткене нумай тĕлте сиенленĕ, авса пĕтернĕ. Мрамор баллюстрадине темиçе тĕлте снаряд ванчăкĕсем тата пульăсем тивсе сиенленĕ.

Бомбăсем пăрахнине пула тата нимĕçсем хывса хăварнă фугаслă бомбăсем сирпĕнсе кайнине пула, памятник ларакан сăрт шуса аннă, çавăн пирки памятник хĕвелтухăç еннелле 10—12 градус таййалнă.

1944 çулхи февраль уйăхĕн вĕçĕнче Пушкин заповедникĕнче Пушкинăн вилĕ тăприне сыхласа тăнă хуралçа И. Х. Харитонова та заповедникран кăларса янă. Пĕртак вăхăт иртсен Пушкинские Горы ялне пĕр кунлăха пыма ирĕк парсан, Харитонов унта Пушкинăн вилĕ тăпри çинчи памятнике васкаса хăмасемпе çапса лартнине курнă. Комисси çакна пĕлнĕ: çав памятнике нимĕçсем унта минăсем вырнаçтарса лартнине пытарасшăн пулса хăмасемпе çапса лартнă. Вырăс çыннисене Пушкин заповедникĕн районĕнчен кăларса ярсан, нимĕçсем Пушкинăн вилĕ тăприне, Святогорски монастыре тата поэтăн вилĕ тăпри выртакан сăрта сирпĕнтерсе яма хатĕрлене пуçланă.

Монастырĕн çурçĕр енчи стени çумĕпе пыракан çул айне фугас хунă, çав фугас сирпĕнсе кайнипе вара монастырь стени 20 метр тăршшĕ вырăнта ишĕлсе аннă.

Иккĕмĕш питĕ вăйлă фугасне нимĕçсем хĕвелтухăç енчи çул айне, Пушкинăн вилĕ тăпри çывăхне хурса хăварнă. Нимĕçсем çав фугаса вырнаçтарма ятарласа 20 метр тăршшĕ туннель чавнă, ăна курăнмалла мар туса хунă. Çав туннеле хăйне уйрăм минăсем тата 120-шер килограмм таякан 10 авиабомба хунă. Анчах Хĕрлĕ Çар питĕ хăвăрт наступлени туса пынă пирки нимĕçсем çав туннеле сирпĕнтерсе яма ĕлкĕреймен.

Оккупантсем çакна лайăх пĕлнĕ: Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе офицерĕсем Пушкинские Горы ялне пырсанах чи малтан поэтăн вилĕ тăприне пырса кураççĕ, çавăнпа нимĕçсем çав вилĕ тăприне патриотсене тытмалли вырăн туса хунă. Монастырь территорийĕнче тата унпа çывăх вырăнсенче Смирновпа Сачкевиус подразделенийĕсен саперĕсем 3.000 минăна яхăн тупнă.

Пушкин заповедникĕн территорине питĕ нумай мина хурса хăварнă. Фронталла каякан саперсен чаçĕсем пур минăсене те тупса кăларма ĕлкĕреймен. Комисси заповедникра пурăннă чухне нимĕçсен минисем çине пулса кулленех темиçешер совет гражданĕ вилнĕ. Çапла, акă, туллимар даннăйсем тăрăх, июлĕн 26-мĕшĕнче 3 çын вилнĕ: Дмитрий Андреев, Анатолий Алексеев, Алексей Васильев; июлĕн 27-мĕшĕнче — Петр Михайлов, Прасковья Богданова, Клавдия Петрова, Сергей Андреев вилнĕ; июлĕн 28-мĕшĕнче—Евгений Евстюгин тата Иван Прокофьев сирпĕнсе кайса вилнĕ.

Гитлерла вăрă-хурахсем Пушкин заповедникне çавăн пек тустарса пĕтернине тата ишĕлтернине пĕлни фашистла нимĕç захватчикĕсем калама çук тискер ĕçсем тунине тата тепĕр хут кăтартса парать.

Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси çапла шутлать: фашистла нимĕç захватчикĕсем Пушкин заповедникĕнче тунă мĕнпур тискер ĕçсемшĕн Германи правительстви тата унăн çар командованийĕ айăплă, çавăн пекех тата уншăн памятниксене хăйсем ишĕлтернĕ çынсем — Трайбхольц комендант, Зангер майор, Зингер капитан, Фоссфинкель обер-фельдфебель, Иосиф Амель инженер тата Шиллер айăплă.

Çав тискер преступленисемшĕн вĕсене пурне те пысăк наказани памалла.

Александр Покрышкинăн тăван хулинче

Александр Покрышкин ятне Новосибирск хулинче пурте асăнаççĕ. Ăна виççĕмĕш «Ылттăн Çăлтăр» медальпе наградăлани çинчен калакан хыпар фабрикăсемпе заводсене часах сарăлнă, ĕççыннисене вĕсен çавăн пек чаплă земляк пуррипе савăнтарнă.

«Совет Союзĕн Виçĕ хут Геройĕ ятне илнĕ пĕрремĕш çын вăл — пирĕн хула ачи» тени пур çĕрте те илтĕнет. Площадьре область исполкомĕн çурчĕ умĕнче чаплă митинг пулса иртнĕ. Унта ВКП(б) область тата хула комитечĕн секретарĕ Кулагин юлташ тата Геройăн Ленин орденлĕ пĕр заводра ĕçлекен тусĕсемпе юлташĕсем сăмах тухса каланă.

Хулари организацисем геройăн амăшĕпе арăмне пулăшаççĕ, вĕсемшĕн тăрăшаççĕ. Покрышкина наградăлани çинчен хыпар çитнĕ кун унăн амăшĕпе арăмĕн хваттерне унăн тусĕсемпе юлташĕсем пуханнă. Новосибирск хули совечĕн представителĕ унăн амăшĕ патне пырса çапла пĕлтернĕ: Новосибирск хули варринчи пĕр урамра сан валли виçĕ пÿлĕмлĕ çурт туса пĕтереççĕ, тенĕ. (ТАСС).

Киеври АТС ĕçлеме пуçланă

Киеври АТС (автоматлă телефон станцийĕ) ĕçлеме пуçланă. Вăл халь 4.000 телефона çыхăнтарса тăрать. Станци аппаратурине çав тери кĕске срокра — 3,5 уйăх хушшинчех майлаштарса лартнă, ахаль чухне ун пек аппаратурăна вырнаçтарса лартма 8—9 уйăх кирлĕ пулаканччĕ.

АТС-ăн иккĕмĕш черетри пайне — 8.000 телефона çыхăнтарса тăраканнине — тума пуçлаççĕ. (ТАСС).

Румыни ĕçĕсем

Перемири тăвас пирки калаçма Мускава Румыни правительствин делегацийĕ килнĕ. Делегацире çак господинсем тăраççĕ: Б. Стирбея, К. Вишояну, Л. Патрашкану (юстици министрĕ), Д. Дамачану (шалти ĕçсен вице-министрĕ), И. Кристу, Г. Попп тата И. Фокшаняну подполковник.

Румыни делегачĕсене аэродромра СССР Наркоминделĕн Протоколсен Отделĕн тата Оборона Наркомачĕн Тулашри çыхăнусен Отделĕн представителĕсем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

Болгари правительствин ултавлă маневрĕсем

(ТАСС обозревателĕн статьи)

Августăн 26-мĕшĕнче Болгари правительстви Болгари çĕршывĕ пĕр пăркаланмасăрах нейтралитет тытасси пирки пĕлтерчĕ.

Болгари правительствин çав пĕлтерĕвĕ пирки ют çĕршыв хаçачĕсенче нумай çыраççĕ. Вĕсем çакна тĕрĕс палăртаççĕ: Болгари правительстви çавăн пек решени йышăнасси ун умне çĕнĕ лару-тăру тухса тăнинчен килнĕ. Хĕрлĕ Çар нимĕç çарĕсене Совет Союзĕпе Германи фрончĕн кăнтăр участокĕнче çĕнĕрен çав тери хăвatлăн пыра-пыра çапрĕ. Çакна пула вара гитлеровецсем умне вĕсен Балканри пĕтĕм флангне татăклăн, пĕтерсе тăкмаллах çапса аркатас хăрушлăх тухса тăчĕ. Хĕрлĕ Çарăн тата союзниксен çарĕсен Хĕвеланăç Европăри çĕнтерĕвĕсем Германие вилĕм шăтăкĕ умне пырса тăратрĕç. Çавăн пирки ĕнтĕ Болгарире Багрянов правительствин гитлерла политикине хирĕç оппозици вăйланса кайнă.

Германин вăрçă тĕлĕшĕнчи лару-тăрăвĕ татах та ытларах начарланнипе тата Болгарири оппозициллĕ ушкăнсен политикăллă активлăхĕ ÿснипе шикленсе ÿкнĕ Багрянов правительстви маневр туса пăхма шутларĕ. Çав маневра Багрянов правительстви Болгарири обществăллă шухăша лăплантарас ĕмĕтпе туни куçкĕретĕнех курăнса тăрать. Багрянов правительстви гитлерла Германипе пĕр пулса ĕçлени пирки тарăхакан Болгари общественноçне мĕнле те пулсан лăплантармалла-çке-ха!

Темиçе кун каярах Багрянов тата Болгарин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Драганов парламентра сăмахсем тухса каланă. Çав сăмахсенче вĕсем хăйсем миршĕн тăратпăр тесе тата вăрçа хутшăнмасăр, хăйсем тĕллĕн çĕнĕ политика тытса пыма шутлатпăр тесе пĕлтернĕ. Çав вăхăтрах вĕсем Болгарири гитлерла ушкăнсем пĕтĕм вăрçă тăршшĕнче тытса пынă политикăна пур майсемпе те тÿрре кăларма хăтланнă. Вĕсем Болгарин ирĕксĕрех виçĕ енлĕ пакт çумне хутшăнма лекнĕ тесе калаçаççĕ. Кунта Драганов çакăн пек суйса пĕлтересси умĕнче те чарăнса тăман: Болгари çав виçĕ енлĕ пакт çумне хутшăнасси ССР Союзĕ унчухне Германипе йĕркеллĕ çыхăнусем тытса тăнинчен кăна килнĕ, тенĕ.

Болгарири обществăллă шухăша улталама хăтланса, Багрянов парламентра сăмах тухса калас умĕн парламентри оппозици представителĕсене çапла каланă пулнă: оппозици представителĕсем кăшт каярах юлчĕç тенĕ вăл, мĕшĕн тесен, вĕсем ыйтнисене пурне те правительство Багряновăн пуçарăвĕпе хăй ĕçĕн программине кĕртнĕ, тенĕ. Çавăн пек суя маневр туса, Багрянов оппозицин нумай представителĕсене улталама пултарнă. Багряновăн сăмахне парламентра сÿтсе-явнă чухне, çав сăмаха оппозицире тăракан нумай депутатсем, хăйсен айванлăхне пула, ырланă. Çакă питех те тĕлĕнтерет: Цанков тата ытти тĕрлĕ гитлерла агентсем, вăрçă пыракан мĕнпур тапхăрта Гитлерпа тÿрремĕнех пĕр каварлă пулса ĕçленĕскерсем, малтанах Болгари правительствин «çĕнĕ» политикине критикленĕ, кайрантарах вара ăна пур енĕпе те пулăшма тытăннă. Багрянов политикине пулăшасси çинчен çавăн пекех тата «паллă» Кожухаров та тухса калаçнă. Кожухаров Болгари халăхĕ умĕнче чи паллă фашистла нимĕç лакейĕ пулса тăнипе «чапа» тухнă.

Çакна палăртмалла: Болгари правительстви хăй нейтралитет тытасси çинчен каланине малтанхи кунсенчен пуçласах пăснă, халĕ те пăсса пырать. Çакна пурте пĕлеççĕ: Германин хĕçпăшаллă суднисем Дунайăн Болгари урлă каçакан тăрăхĕнче тата Болгарин Хура тинĕс çинчи порчĕсенче халĕ те тăраççĕ. Болгари правительстви вара çав карапсемпе вĕсен командисене тытса чарасси çинчен шухăшламасть те. Болгари çарĕсем, нимĕн те пулман пекех, гитлерла оккупантсемпе пĕрле, Югославин халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарне хирĕç, çавăн пекех тата Болгари оккупациленĕ Греци территорийĕсем çинче грек халăхне хирĕç кĕрешеççĕ. Германин Болгарире тăракан çарĕсене хăйсен мĕнпур хĕçпăшалĕсемпе тата снаряженийĕсемпе Болгарирен çăмăллăнах тухса кайма ирĕк панă. Нимĕçсем турттарса кайма пултарайман хĕçпăшалсемпе снаряженин пĕр пайне Болгари правительстви Германин суту-илÿри парăмĕсене витес шутпа хăй аллине йышăнать. Болгари пур енĕпе те нейтралитет тытасси çинчен пĕлтернĕ хыççăн Болгари правительстви нимĕçсемпе тунă çав килĕшÿ Болгари правительствин чăн-чăн шухăшĕсене çĕнĕрен кăтартса парать. Çакă вăл, кунта асăннă ытти фактсемпе пĕрле, Багряновпа Драганов правительстви хăйĕн политикинче татăклă çаврăнăш тума тĕрĕссипе пачах та шутламанни çинчен, гитлерла Германипе туслă пулса ĕçлессинчен пăрăнма шутламанни çинчен калать.

Болгари правительстви нейтралитет çинчен пĕлтерни тавра çав тери вăйлă шав пуçласа ярса, болгарсен пропаганди тĕрлĕрен жуликла сăмахсем сарма хăтланать. Болгари пропаганди саракан суя сăмахсем тăрăх, Совет правительстви Болгари правительствин хальхи позицине ырланă пулать вара. Болгари правительствин çав ултавлă маневрĕсене ТАСС августăн 30-мĕшĕнче пичетленĕ опровержение тăрă шыв çине кăларнă. Опровержение çакна кăтартса панă: «Советăн ертсе пыракан ушкăнĕсем Болгари правительстви вăрçа нихăшин майлă та хутшăнмасăр тăрасси çинчен пĕлтернине халĕ пулса тăнă лару-тăрура пачах çителĕксĕр тесе шутлаççĕ», тенĕ.

Болгари правительствин ултавлă маневрĕсем пĕтĕмĕшпех путланса ларасси умĕнче тăраççĕ.

Н. БОДРОВ.

Люблин хулинче Хĕрлĕ Çар воинĕсене памятник лартнă

ЛЮБЛИН, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Люблин хулинче траурлă митинг пулса иртнĕ. Çак митинг фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿре Люблин хулине ирĕке кăларассишĕн çапăçса вилнĕ Хĕрлĕ Çар боецĕсене лартнă памятнике уçнă май пулса иртнĕ. Памятнике уçма темиçе вунă пин халăх пуханнă.

Митингра Осубка-Моравский сăмах тухса каланă. Гитлер бандичĕсен оккупацине тÿссе курнă Польша халăхĕпе совет халăхĕн асапĕсем, — тенĕ вăл, — пирĕн халăхсемпе пирĕн воинсен пĕр тăшмана хирĕç пыракан кĕрешÿре тăкăннă юнĕ — пирĕн туслăха çирĕплетнĕ цемент пулса тăчĕ. Совет Союзĕпе туслă пурăнакан вăйлă, никама пăхăнмасăр пурăнакан, демократиллĕ Польша тăвас ĕçĕн никĕсĕ пулса тăчĕ. Польшăпа совет хушшинчи çыхăну ĕçĕнче питĕ пысăк улшăну пулса тăчĕ, тенĕ. Осубка-Моравский малалла çакна палăртса каланă: Совет правительствипе Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕ нумайлăха пыракан пăсăлми туслăх тата Европăра çирĕп мир тума тăрăшаççĕ. Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕн çак политики, — тенĕ малалла оратор, — пĕтĕм Польша халăхне килĕшрĕ, Польша халăхĕ çак политикăна лайăх ăнланса илчĕ, ăна пулăшса тăрать. Польша халăхĕ Хĕрлĕ Çара — ирĕке кăларакан çара—хавасланса саламлать.

Митинг хыççăн çар парачĕ тата Люблинри профсоюзсен членĕсен парачĕ пулнă.

Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, августăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Союзниксен Труа хули патĕнче Сена шывĕ урлă каçнă çарĕсем çав хуларан 15 мильăра ларакан пункта çитнĕ. Çав шыв урлă каçма Труа хулинчен темиçе миля çурçĕртерехре тепĕр каçă хывнă. Союзниксен çарĕсем çурçĕрелле тата хĕвелтухăçнелле куçса пыраççĕ, Марна шывĕ тăрăх аналла анса, Монмирайль патне çитнĕ. Ла-Фертеюсюр-Жуар хулине ирĕке кăларнă. Мо хулинчен çурçĕртерехре союзниксен бронетанковăй вăйĕсем Марнăран 14 мильăри Кювенрньона çитнĕ. Çарсем хăвăрт малалла куçса пыраççĕ, тăшман вĕсене хытă хирĕç тăмасть.

Союзниксен çарĕсем Сена шывĕн пĕтĕм тăрăхĕпе тенĕ пекех хытă çирĕпленсе ларнă. Тăшман аллинче çав шывран кăнтăртарахри, Эльбеф хулипе тинĕс хушшинчи шыв кукринчи территори çеç тăрса юлнă.

Бретаньре союзниксен чаçĕсем Брест хули патне виçĕ енчен пыраççĕ, вĕсем майĕпен, анчах та пĕр чарăнмасăр малалла куçса пыраççĕ. Тăшман вĕсене çав тери хаяррăн хирĕç тăрать.

Союзниксен авиацийĕ тăшман объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

* * *

ЛОНДОН, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем Парижран иртсе кайнă хыççăн çав тери хăвăрт наступлени туса пыраççĕ, вĕсем Эн шывĕ урлă каçса кайнă тата Марна шывĕ урлă унăн тури тăрăхĕнче каçнă. Союзниксен ытти чаçĕсем Марна шывĕн хĕвеланăç хĕрринче, Шалон-сюр-Марн хулинчен кăнтăртарахра тăраççĕ, хулана çитесси пĕр миля та юлман. Марн шывĕ çинчи Шато-Тьерри хулине ирĕке кăларнă. Союзниксен бронетанковăй чаçĕсем çурçĕрелле, Суассон хули патнелле куçнă, Эн шывĕ çинче Порт-Арсире (Суассон хулинчен 14 миля хĕвелтухăçнерехре) тăшмана тапăнма укреплени тунă. Союзниксен çарĕсем Парижпа Руан хушшинчи çула татнă.

Союзниксен çарĕсем Руан центрĕнчен хĕвелтухăçнерехре мĕн пурĕ те 5 мильăра кăна тăраççĕ.

Бретаньре Брест патĕнче çаплах хаяр çапăçусем пынă. Союзниксен çарĕсем майĕпен порт патне çывăхарса пыраççĕ.

Августăн 29-мĕшĕнче, начар çанталăк тăнă пирки, авиаци вăйлă çапăçайман.

СОЮЗНИКСЕМ ПАРИЖ РАЙОНĔНЧЕ 11.000 НИМĔÇЕ ТЫТКĂНА ИЛНЕ

ЛОНДОН, августăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Парижри корреспонденчĕ каланă тăрăх, августăн 28-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ: Париж районĕнче 11.000 нимĕçе, çав шутра — Германин 84-мĕш корпусĕн командующине Шультиц генерала та тыткăна илнĕ. Çав корпус вăл американецсен Парижа кĕрсе кайнă çарĕсене хирĕç тăнă пулнă.

ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ ПАРИЖРА

АЛЖИР, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, Париж йĕркене кĕрсе пырать. Хулари халăх хула урамĕсене баррикадăсенчен тасатать. Магазинсен урамри çапăçусем вăхăтĕнче çĕмĕрсе пĕтернĕ витринисене кантăксем лартаççĕ. Магазинсем, столовăйсем уçаççĕ. Паллă нимĕç тарçисене тытса хупнă.

Болгарири лару-тăру

СОФИЯ, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири телеграф агентстви çапла пĕлтерет:

Болгари правительстви ыйтнипе Германин Болгарири чаçĕсемпе çар службисене Болгарирен илсе тухма пуçланă, вĕсене темиçе кунтан йăлтах илсе тухса пĕтереççĕ. Германин Румынирен Болгари çĕрĕ çине чакакан чаçĕсене хĕçпăшалсăрлантараççĕ.

БОЛГАРИРЕ ЕВРЕЙСЕНЕ ХИРЕÇ ЙЫШАННĂ ДЕКРЕТСЕНЕ ПĂРАХĂÇА КĂЛАРНĂ

СОФИ, августăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Софири радио пĕлтернĕ тăрăх, Болгарире министрсен совечĕ, правительство кăларнă декларацие пурнăçлас шутпа, ĕлĕкрех еврейсене политикăпа пурлăх тĕлĕшĕнчен хĕсĕкрех условисем туса панă законсене пăрахăçлама тата «еврейсен ыйтăвĕпе ĕçлекен комиссарната» хупма йышăннă.

Румынири лару-тăру

РУМЫНИ КОМАНДОВАНИЙЕ ПЕЛТЕРНИ

ЖЕНЕВА, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Бухарестри радио ĕнер Румынин верховнăй командованийĕн пĕлтерĕвне панă. Çав пĕлтерÿре çапла каланă: Румыни çарĕсем малтан палăртнă объектсене тытса илес тĕлĕшпе кĕрешнĕ. Бухарестра нимĕçсем хирĕç тăнине пĕтерсе тăкнă, унта халь шăпах тăрать. Халь Бухарестран çурçĕртерехре хăйсен позицине вăйлă хÿтĕлекен нимĕçсемпе хаяррăн çапăçаççĕ. Тăшманăн çирĕплетнĕ пункчĕсене пĕрин хыççăн тепĕрне пĕтерсе пыраççĕ. Августăн 27-мĕшĕнче ирхине Тырговиште хулине тата аэродромне тытса илнĕ. Брашов районĕнче тусем урлă каçас тесе, нимĕçсем Бузэу хулипе Плоешти хули хушшинчи çул тăрăх тата Плоешти тавра пысăк вăйсем илсе пыраççĕ. Валахия, Ольтения тата Добруджи территорийĕнче румын çарĕсем йăлтах хуçа пулса тăраççĕ. Германи çарĕсене унта хĕçпăшалсăрлантараççĕ, вĕсене ытти çĕре куçма памасăр тытса тăраççĕ.

Трансильванире Германи çарĕсем, Венгри чаçĕсем пулăшса пынипе, чикĕ урлă каçма хăтланнă, анчах та пысăк çухатусем тÿссе каялла чакнă. Ытти икĕ пунктра тăшмана хĕçпăшалсăрлантарнă. Çар материалĕсем, çав шутра медикаментсем, нумай тытса илнĕ.

Дунай шывĕ çинче Германи караванĕ хĕвеланăçнелле кайма хăтланнă, анчах та ăна Румынин юханшыв çинчи флотилийĕ атакăланă тата çыран хĕрринчи батарейĕ пенĕ. Икĕ торпеда катерне тата 4 буксира шыва путарнă. Кунсăр пуçне, 10 суднăна сиенленĕ, 2 суднăна тытса илнĕ.

Августăн 26-мĕшĕнче Румыни авиацийĕ нимĕçсен 10 самолетне персе ÿкернĕ.

Çапăçусем пуçланнăранпа 12.000 çынна тыткăна илнĕ. Германин йышлă вагонĕсене тата темиçе çĕр автомашинине тытса илнĕ.

Венгри правительстви вырăнтан тухнă

ЖЕНЕВА, августăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлер агентстви—Германин информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, паян Венгри правительстви вырăнтан тухнă. Хорти регент Лакатош генерала премьер-министр вырăнне лартнă.

ВЕНГРИН ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ÇИНЧЕН

ЖЕНЕВА, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлеровецсен Трансоцеан агентстви пĕлтернĕ тăрăх, венгерсен Лакатош генерал тунă çĕнĕ правительствине темиçе кивĕ министр кĕнĕ. Хăйсен малтанхи вырăнĕсенчех оборона министрĕ Чатаи генерал, финанс министрĕ—Ремоньи-Шнеллер, çĕр ĕç министрĕ Бела Юрчек, шалти ĕçсен министрĕ Бонцош юлнă. Бела Юрчек çĕр ĕç министрĕн ĕçĕсемсĕр пуçне тата снабжени министрĕн ĕçĕсене те туса тăрать.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулма Энхеи фельдмаршала лартнă, юстици министрĕ пулма—Бладара, çутĕçпе культ-министрĕ пулма — Раковские, суту-илÿ министрĕ пулма — Маркоша, промышленность министрĕ пулма—Дьюлаине лартнă.

Лакатош çапла каланă: çĕнĕ правительствăн программине «çак вăрçăра малалла вăрçасси» кĕрет, тенĕ. Лакатош çакна асăрхаттарса каланă: «Çак питĕ йывăр вăхăтра фронтпа тыл хушшинчи шухăш-кăмăл çыхăнăвĕ çителĕклĕ пулмалла», тенĕ. Вăл «йĕркелĕхпе дисциплинăна пăсакансене» хаяррăн айăплассипе хăратнă.

ФИНЛЯНДИРИ ХУЛАСЕНЧЕ ПОЛИЦИ ÇЫНСЕНЕ ХУПАРЛА-ХУПАРЛА ТЫТАТЬ

СТОКГОЛЬМ, августăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Финсен «Ууси Суоми» хаçачĕ çапла пĕлтернĕ: юлашки кунсенче полици Хельсинки хулинче тата Финляндири ытти чылай хуласенче çынсене хупăрла-хупăрла тытнă. Полици Финлянди çарĕнчен тарнă çынсене тата ĕçлеме мобилизацилессинчен пăрăнса юлнă çынсене нумай арестленĕ.

ИРАН ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРАНТАН ТУХНА

ТЕГЕРАН, августăн 28-мĕшĕ. (Вăхăтра çитермен). (ТАСС). Августăн 26-мĕшĕнче каçхине Саед правительстви вырăнтан тухнă. Августăн 29-мĕшĕнче шах Саеда çĕнĕ правительство тума хушнă.

ЧЕРЧИЛЛЬ АНГЛИЕ ПЫРСА ÇИТНЕ

ЛОНДОН, августăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: паян каçхине премьер-министр Черчилль Италирен Англие çитнĕ, вăл самолетпа килнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР
сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа
КУНСЕРЕНЕХ
А. П. Чеховăн «Свадьба» ятлă произведенийĕ тăрăх тунă илемлĕ çĕнĕ фильм
«СВАДЬБА»
кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.
Билетсем малтанах илсе хума юрать. Касса ирхине 10 сехетрех ĕçлеме тытăнать.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместитель секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00663 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.